Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 131 N (4700) | *1998 çулхи ноябрь (чӳк) уйăхĕн 18-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

## Кăтартусем савăнтараççĕ



Çак сăнӳкерчĕкри хĕрарăмсем пурте ырă кăмăллă, тăрăшуллă, ĕçе юратаканскерсем. Вĕсем - ял ĕçченĕсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем, тĕплĕнрех каласан, "Надежда" агрофирмăн районти паллă "Агрокультура" кооперативĕнче сысна пăхакансем. Маларах вĕсем майракаллă шултра выльăх пăхнă, халь вара иккĕмĕш çул ĕнтĕ сыснасем пăхаççĕ. Вĕсене чи яваплă та пĕлтерĕшлĕ участок шанса панă: тăкаксене хирĕçле механизма хута янă фермăри ĕç. Кунта мĕнпурне алăпа тумалла, хушма тăкаксемлĕ механизмсем çук, тĕслĕхрен, транспортер. Çав вăхăтрах кунти тасалăхпа йĕркелĕх, ĕçри пысăк кăтартусем тĕлĕнтереççĕ. Иртнĕ уйăхсенче выльăхсем талăкра вăтамран 350 грамм ӳт хушнă, вилнĕ тĕслĕхсем те çук. Фермăра час-часах пулакан районти ертӳçĕсем, специалистсем, пысăк хăнасем вĕсенчен кăмăл-туйăм çинчен ыйтса пĕлеççĕ, кунта ĕçлекенсем вара питĕ лайăх тесе хуравлаççĕ. Чăнах та, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсем пуçĕсене усмаççĕ. Хăйсене мухтанине итлеме кăмăллă ĕнтĕ, çапах та юлашки вăхăтра вĕсемшĕн чи пысăк савăнăç районта нумаях пулмасть иртнĕ "Пĕтĕм чунтан" тĕлпулăва чĕнни пулнă пулĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин хăй чĕнсе янă, тĕлпулура вара вĕсене ырлăх-сывлăх суннă. Вĕсен ĕçне çакăн пек пысăк хак пани, паллах, тата та тăрăшуллăрах ĕçлеме хистет.

Сăнӳкерчĕкре: сысна пăхакансем - Галина Кузьминична Виноградова, Нина Ивановна Ефремова тата Валентина Федоровна Кульметьева.

## Ноябрĕн 29-мĕшĕ - Анне кунĕ

Анне... Пирĕншĕн чи ырри çак сăмахпа çыхăннă. Ноябрĕн 29-мĕшĕнче Тутарстанта пĕрремĕш хут Анне кунĕ иртет. Апла пулсан, пирĕн аннесене - ывăл е хĕр пĕччен ӳстерекенсене, пысăк çемьеллисене е предприятири кĕскетӳ пирки ĕççĕр юлнисене пăшăрхантаракан нумай ыйтăва тимлĕх уйăрма сăлтав пур. Ку "Ырлăх тата хĕрхенӳ" акцие тĕпе хурса нумай ачаллă çемьесенчи инвалид-ачасене пурлăх енчен пулăшасси те, çитменлĕхпе аптракансене валли ăшă тумтир пухасси те, хĕрарăмсен активĕпе вырăнсенчи çемьесенче пулса курасси те. Пирĕн хĕрарăмсен сывлăхĕ - пирĕн наци сывлăхĕ. **Ноябрĕн 19 тата 26-мĕшĕсенче** районти тĕп больницăри хĕрарăмсен консультацийĕнче кил хуçи хĕрарăмсене тĕплĕн тĕрĕслеççĕ. Çак кунсенче консультацисем, канашсем, чылай уйрăм ыйту çине хурав илме пулать. Сире специалист врачсем кĕтĕç. Медосмотра тӳлевсĕр ирттереççĕ.

## Çамрăксен центрĕ чĕнет

Кашни çыннăн туссем пулмалла. Хулари Çамрăксен центрĕнче çĕнĕ ырă йăла пурнăçа кĕрет: эрнекунхи каçсенче пĕр çулсенчи çынсем пуçтарăнасси - паллашма, калаçма, хăйсен шухăшĕсемпе паллаштарма, юратнă кĕвĕсем итлеме, ташлама. Ноябрĕн 20-мĕшĕнче, эрнекун, 20 сехетре Нурлатри çамрăксен центрĕнче 20-25-çулсенчен иртнисем валли тематика каçĕ иртет. Килĕр! Программа интереслĕ пулĕ, унта хутшăнакансене вара эпир лайăх кăмăл-туйăм сунатпăр. Çамрăксен центрĕн коллетивĕн планĕнче вара 30 çултан иртнисем валли кăна мар, 40-рен иртнисем валли те тĕл пулусем йĕркелесси. Каçсем мĕнле иртни çинчен хаçатăн çитес номерĕсенче вулăр.

## *Калаçу теми - ял хуçалăхĕ*

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Агробизнесăн Тутарстанри институчĕн бази çинче "çавра сĕтел" иртттернĕ, унта ял хуçалăх специалисчĕсем хутшăннă. Ăна ТР ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн Министрĕ В.П.Васильев иртттернĕ. Калаçăва пирĕн район представителĕ, хреченсен хуçалăхĕсен "Киклĕ" ассоциацийĕн председателĕ Н.Ш.Шарапов хутшăннă.

**Ноябрĕн 19-20-мĕшĕсенче районти культура çуртĕнче 9 сехетрен пуçласа 17 сехетчен "Ильдан" фирма таварĕсен ярмăркка-суту-илĕвĕ пулать.**

**Суту-илӳре:**

**- тĕрлĕ тиртен çĕленĕ çухасемлĕ пальто;**

**- тиртен çĕленĕ пальто тата кĕске пальто;**

**- кĕрĕксем, тиртен çĕленĕ курткăсем;**

**- çуркуннехи-кĕрхи пальто.**

## Хисепе тивĕçлĕ

**Ял хуçалăх отраслĕнче нумай çул хушши тата ăнăçлă ĕçленĕшĕн Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç министерстви Ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç промышленноçĕнче ĕçлекенсен кунне уявланă май çак юлташсене Хисеп грамотисемпе наградăланă:**

Хресченсен хуçалăхĕсен "Киклĕ" ассоциацийĕн председательне **Наиль Шакирович ШАРАПОВА;**

Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциаци комбайнерне **Александр Егорович ДОНСКОВА;**

Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен ассоциацири сысна пăхакан **Исхак Исламович ХАЙРУЛЛИНА.**

Вĕсене чун-чĕререн саламлатпăр!

### Выльăхсене хĕл каçарасси пырать

## Фермăсенче йĕрке пулмалла

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинче чи яваплă тапхăрсенчен пĕри - выльăхсене хĕл каçарасси, выльăхсем валли чи лайăх условисем тивĕçтерме хистекенскер, çитрĕ. Кăçал апатсем пĕлтĕрхинчен сахалрах хатĕрленине шута илсен, паян чи малтан выльăхсен йышне сыхласа хăварас тата кирек мĕнле майпа та вĕсен продуктивлăхне чакарас мар тесе тăрăшмалла. Анчах çакна кашни фермăра тивĕçлĕ йĕрке пулсан кăна тума пулать. Эпир ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн специалисчĕсемпе - пай начальникĕпе Р.Сиразетдиновпа тата тĕп зоотехникĕпе Х.Фаткуллинпа, "Зооветснаб" уйрăмĕн начальникĕпе М.А.Немовпа РСУн тата "Агрохимсервис" АО хушма хуçалăхсенче çак отрасльти ĕçсен шайĕпе паллашнă чухне шăп çак аспекта тĕп тимлĕх уйăртăмăр. Специалистсене вырăнсенче те шăп çак ене тимлĕх уйăрма тиврĕ, мĕншĕн тесен лайăх самантсемпе пĕрлех, вĕсем сахал мар, икĕ хуçалăх фермисенче те çитменлĕхсем пурччĕ, вĕсене пĕтерме алă çитмен пулас.

Çурт-йĕр тăвакан тата юсакан управлени майракаллă шултра выльăхсен йышне пĕлтĕрхи шайра сыхласа хăварма пултарнă хăшпĕр хуçалăхсен шутне кĕрет, ку чăнах та çаппа пулнине икĕ фермăра та пулса курса ĕнентĕмĕр. Кӳршĕсене - "Агрохимсервис" АО хушма хуçалăхĕнче - витесен пĕр пайне тултарасси е пачах пушă пулни пăшăрхантарать пулсан (ку лару-тăру ĕнер, паян пулса кайман тата сăлтавсем те сахал мар), Тĕкĕрмелĕнче выльăхсем валли вырăн аран çитет. Сăмах выльăхсене ӳстерсе çитĕнтерекен тата самăртакан ушкăнсем çинчен пырать. Хуçалăх хĕл каçарнă тапхăрта кĕтĕве пăхмалли тата апатлантармалли технологие тивĕçлипе пурнăçлассине тивĕçтерет пулсан, экономика çирĕплĕхне те шанăç пур. Тивĕçлĕ йĕрке тени мĕне пĕлтерет? Шел, çак ыйту çине пур çĕрте те тимлĕн пăхмаççĕ.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Хаçат хакĕ - 25 **тенкĕ те 20 пус;** Аслă Отечественнăй вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтерне çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тӳлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

**Çапла, хаçат çырăнтарасси малалла пырать, çырăнтаракан пунктсене васкăр.**

# КОНСТИТУЦИЯ ТАТАРСТАНА: НА ПУТИ К ПРАВОВОМУ ГОСУДАРСТВУ

В Конституции республики закреплено, что основой экономики Татарстана является **социальное рыночное хозяйство,** в котором в соответствии с законом обеспечиваются свобода хозяйственной деятельности и разнообразие форм собственности. Еще несколько лет назад мы первыми в Российской Федерации провозгласили и юридически оформили незыблемость права частной собственности на землю как основного средства производства. Принятие Государственным Советом в этом году нового Земельного кодекса, а также соответствующих законов будет способствовать активному вовлечению в рыночный оборот земельных ресурсов, в том числе неэффективно используемых. Это тем более актуально, поскольку важнейшей составляющей системы социальной защиты является создание условий для устойчивого и гарантированного производства продовольствия и обеспечение им населения.

Принципиально новым моментом стало появление в Основном Законе раздела **"Организация государственной власти в Республике Татарстан"**, основные положения которого — отражение политических и социально-экономических реалий, сложившихся в республике в начале 90-х годов.

Особое место в системе государственной власти отводится институту президентства. Президент республики — глава государства, высшее должностное лицо, символ и гарант единства народа и государственной власти, государственного суверенитета, незыблемости Конституции, прав и свобод человека и гражданина. Как показывает практика, институту президентства принадлежит важнейшая роль в решении задач трансформации социально-экономических отношений в качественно новое состояние, в укреплении демократических основ общества. Полномочия и правовой статус Президента определены актом высшей юридической силы — Конституцией Татарстана.

Неотъемлемым элементом политической системы Татарстана стал Государственный Совет. Переход на принципиально новую основу функционирования изменил сущностные характеристики законодательного органа. Растущий профессионализм, политическая культура, государственность мышления, чувство ответственности за судьбы людей и республики — все это сегодня неразрывно связано с работой парламента.

В целях завершения формирования целостной системы права Татарстана необходимо скорейшее принятие ряда конституционных законов, работа над которыми давно ведется. Речь, в первую очередь, идет о законе о Кабинете Министров. Юридическое его оформление даст возможность прочно соединить в единое целое власть и ответственность, сбалансировать полномочия законодательной и исполнительной ветвей власти, обеспечить повышение самостоятельности Кабинета Министров в решении вопросов государственного управления. Сильный парламент — сильное правительство, — вот та единственно верная формула, которая лежит в основе построения эффективной демократической системы власти.

Стратегической опорой в достижении идеалов гражданского общества и правового государства, основанного на глубоких демократических принципах, является **институт местного самоуправления**. Сегодня в республике достаточно активно разворачивается процесс создания наиболее приближенных к населению органов управления, занятых решением его повседневных проблем. В их компетенции находятся вопросы социальной защиты, строительства жилья и дорог, благоустройства населенных пунктов; совершенствования работы местного транспорта, бытового и торгового обслуживания, учреждений здравоохранения и образования; охраны общественного порядка, окружающей среды и рационального использования земельных ресурсов.

Укрепление основ местного самоуправления невозможно без государственной поддержки, объединения усилий законодательной и исполнительной ветвей власти. Важным направлением здесь выступает кадровое, организационно-методическое и информационное обеспечение института народовластия. Речь должна идти и о выработке совместной позиции органов государственной власти и самоуправления в преодолении сложившихся противоречий социально-психологического порядка — возросшей в последние годы пассивности граждан, а порой и низкой значимости ценностей самоуправления в массовом сознании. В свете сказанного возрастает необходимость проведения республиканского собрания представителей местного самоуправления по вопросам дальнейшего развития местного самоуправления, намеченного на декабрь текущего года.

Важным фактором становления в Татарстане политической системы нового типа является конституционная норма, закрепляющая право участия политических партий в управлении государственными делами через своих представителей в выборных органах государственной власти. Однако практика развития политического процесса свидетельствует, что **формирование многопартийности** в социуме, где демократические традиции не стали общепризнанными нормами, идет медленно и противоречиво. В Татарстане политические партии, по сути, находятся в начальной фазе институциализации: аморфна их социальная база, низок уровень влияния и авторитета среди населения. Пока они больше выражают интересы конкретных лиц, создавших эти партии, нежели интересы социальных групп, на поддержку которых рассчитывают.

Конституция Республики Татарстан закрепила **новую формулу развития федеративных отношений,** ставшую неотъемлемым элементом нашей жизни и права. Административно-командному типу государственного управления были чужды идеи суверенитета, разделения властных полномочий, самоуправления, без которых сейчас уже невозможно представить разумное ведение хозяйственной и общественной деятельности.

Сегодня формирование договорно-конституционных отношений центра с субъектами федерации, пионером которых выступил Татарстан, прочно вошло в практику государственного строительства, — уже 45 субъектов федерации идут проторенным нами путем. Тем не менее, на разных уровнях федеральной власти, в средствах массовой информации продолжают усиленно пропагандироваться идеи восстановления жесткой централизации и даже "губернизации" страны. Во многом эти подходы реанимируются углубляющимся кризисом федеральной власти, неумением создать дееспособный механизм взаимодействия между центром и регионами, нежеланием определенных сил понять многогранную природу суверенитета и стремлением загнать республики в прокрустово ложе однопорядкового равноправия.

Важным фактором укрепления федеративной государственности должен стать новый стиль общения властей разного уровня. Речь идет о переходе к постоянному диалогу центра с регионами, различных формах конструктивного взаимодействия и выработке четких механизмов согласования принимаемых решений. Отсутствие такого взаимодействия приводит к сохранению причин, ослабляющих государственность и порождающих межнациональную напряженность. Об этом свидетельствуют как унитаристские, так и сепаратистские тенденции, а также факты дискриминации и нарушения конституционных прав граждан по национальному признаку. Дает о себе знать и отсутствие необходимых нормативно-правовых актов, призванных регулировать различные стороны федеративных и национальных отношений.

В последнее время попытки нарушения суверенных прав республик в самостоятельном решении вопросов государственного управления становятся все более настойчивыми. Наглядный тому пример - сложившаяся критическая ситуация в стране после 17 августа. При полном бездействии федерального центра именно властные институты на местах взяли на себя всю меру ответственности перед населением за преодоление свалившихся, как снежный ком, социально-экономических проблем. Поэтому обвинения в адрес законно избранных руководителей регионов за так называемые удельно-княжеские подходы и угрозы последующих "оргвыводов" являются по сути антиконституционными и выступают ни чем иным, как стремлением переложить всю меру ответственности "с больной головы на здоровую".

Несовершенство Конституции России сегодня признается многими политиками и учеными-правоведами. В то же время среди них немало и тех, кто настаивает на приведении конституций суверенных республик в соответствие с федеральной Конституцией. По-видимому, у тех, кто стоит на таких позициях, зачастую отсутствует чувство реальности и ясное понимание, что законодательство субъектов федерации не может быть изменено немедленно и в одностороннем порядке. Только двигаясь навстречу друг другу можно преодолеть имеющиеся разночтения. На это потребуются годы и десятилетия, ведь федерация находится в переходном периоде своего становления и ее асимметричность — естественное следствие исторически сложившихся социально-экономических условий развития общества.

Важнейшим политико-правовым завоеванием республики стало закрепление в Конституции положения о **международной правосубъектности** Татарстана, получившего свое дальнейшее развитие в Договоре с Российской Федерацией. Естественным следствием принятия указанной нормы стало заключение республикой 49 договоров и соглашений с иностранными государствами, субъектами иностранных федеративных государств, а также с административно-территориальными образованиями иностранных государств, охватывающих сферы экономики, торговли, культуры и научно-технического сотрудничества. Подписаны также договоры и соглашения о дружбе и сотрудничестве с 15 республиками и с 41 краем и областями Российской Федерации.

Активная деятельность республики приносит свои ощутимые результаты. Расширение международных связей позволяет нам эффективнее решать приоритетные задачи, связанные с защитой экономических интересов Татарстана и прав его граждан за рубежом, привлечением в республику иностранных инвестиций. О растущем престиже и достаточной надежности Татарстана на международной арене свидетельствует и тот факт, что, несмотря на постигший Россию кризис, не только наши ведущие стратегические партнеры, но также и средние фирмы не свернули свой бизнес и не ушли с рынка республики.

Отметив шестую годовщину принятия Конституции, мы твердо можем сказать, что Основной Закон с честью выдержал испытание на прочность. Основополагающие конституционные идеи завоевывают умы и сердца татарстанцев, становятся нормой их повседневной жизнедеятельности, служат надежным ориентиром поступательного развития Республики Татарстан на рубеже двух тысячелетий.

**(Газета "Республика Татарстан" за 6 ноября 1998 г. В сокращении.)**

## Фермăсенче йĕрке пулмалла

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

Тĕрĕс, пĕлтĕр икĕ уйрăмра та ÿстерсе çитĕнтерекен тата самăртакан ушкăнсенче выльăхсене кăкармасăр усрасси çине куçарнă, кăçал та кунта çак меслетпе ĕçлеççĕ. Выльăхсен рационне илсен, кăçал концентратсем пĕлтĕрхи пек нумай мар пулин те, сĕтеклĕ апатсем çителĕклĕ, çаплах кунта утă тата улăм сахал мар хатĕрленĕ. Тĕрĕс ĕнтĕ, кĕрхи йĕпе-сапа утăпа улăма фермăсен çывăхне çителĕклĕ чухлĕ турттарма май паман, анчах çул лайăхлансанах ку ыйтăва татса парасса иккĕленӳ çук. Акă картасенче силос тата сенаж салатмалли кункрасем е пачах çук, е вĕсем çителĕксĕр. Паллах, çĕр, пылчăк çине пăрахнă апатсене выльăхсем пĕтĕмпех çисе ярайманççĕ тата тутлăхлă веществосем кирлĕ чухлĕ илеймеççĕ. Красномайнски уйрăмĕнчи çак ушкăнри выльăхсен рационĕ те халлĕхе чухăн, пур апата перекетлени вара усă мар, сиен кӳрĕ, мĕншĕн тесен çакă самăртмалли тапхăра вăраха тăсасси патне илсе пырать тата пĕтĕлентерес тапхăр тĕлне ĕнесем тивĕçлĕ виçене çитмессе те пултараççĕ. Çакă вара мĕне çаврăнассине выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине кăшт та пулин ăнкартакан çын лайăх ăнланать. Çавăнпа та çамрăк выльăхсем илес тĕлĕшпе пĕлтĕр тата кăçал пысăк кăтартусем тунă тĕкĕрмелсем хăйсен результачĕсене чакарма пултараççĕ. Чăнах та, икĕ фермăра та пăрулаттармалли уйрăмсем ĕçлеççĕ, пĕтĕ ĕнесене ятарлă рационпа апатлантараççĕ, сĕлле вĕрилентерсе парас ĕçе майласа ямалли кăна юлнă. Çамрăк выльăхсене сивĕ çĕрте усрани те вĕсене пысăк усă панă, çавăнпа та ку меслете кăçал та пăрахăçламан. Выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕçре пухнă опытпа пĕлсе усă курмалла. Ку вăл чи малтан кăкармасăр усракан выльăхсен айне çителĕклĕ улăм сарассине тивĕçтерессине тивет.

Асăннă çитменлĕхсемсĕр пуçне ытти кăлтăксем те пур. Вĕсем çинчен маларахах каланăччĕ ĕнтĕ, çаплах вырăнти специалистсене, вăтам звено ертӳçисене асăрхаттарнăччĕ, вĕсем вара çакăнпа килĕшнине тата çав çитменлĕхсене çитес çывăх вăхăтра пĕтерме хатĕрри çинчен пĕлтерчĕç.

**Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.**

# Учитель тата наставник

Питĕ лайăх учитель, çамрăксен наставникĕ Валентин Николаевич Егоров Чулпанти вăтам шкулта вăтăр виçĕ çул ĕçленĕ. Физикăпа математика учителĕ технологи урокĕсене те илсе пырать. Валентин Николаевич учениксене вĕренӳ ĕçне пĕлме, хăнăхма кашни урокра çине тăрса, тĕллевлĕ вĕрентет, вĕрентекен материалта чи кирлине палăртать. Вăл хăйĕн ĕçĕнче вĕрентĕвĕн тĕрлĕ мелĕсемпе усă курать, ачасене пĕлĕве хăйсем тĕллĕн тупма вĕрентет. Технологи урокĕсенче Валентин Николаевич арçын ачасене хăйĕн пĕтĕм ăсталăхне парать, вĕсене инструментсемпе усă курма, токарь станокĕпе ĕçлеме вĕрентет.



Вĕренекенсем Валентин Николаевича çирĕп ыйтнăшăн, тĕрĕслĕхшĕн юратаççĕ тата хаклаççĕ. Вăл питĕ лайăх класс руководителĕ. Вĕренекенсем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетес, пĕр-пĕрне ăнланччăр тесе вăйне те вăхăтне те шеллемест: класпа экскурсисене, походсене çӳрет, çапла, иртнĕ вĕренӳ çулĕн вĕçĕнче вăл ачасемпе пĕрле икĕ кунлăх туристла походра пулнă.

Ăна ял çыннисем те хисеплеççĕ. "Чи интеллигентлă арçын, питĕ лайăх çемье пуçлăхĕ", - теççĕ ун çинчен ентешĕсем. Çакă тĕрĕс, ялта пурăнсан пурте курăнать вĕт, кунта суйма çук. Валентин Николаевичпа мăшăрĕ Лидия Ивановна, вăл та вĕрентекен, тăвату ача пăхса ӳстернĕ: виçĕ хĕрĕ хăйсем çемьеллĕ ĕнтĕ, ывăлĕ вара Елабугăри пединститутра вĕренет. Кĕçĕн Егоровсем хăйсен аппĕ-амăшĕ пек, аслисен вĕсемшĕн хĕрелме тӳр килмест.

Валентин Николаевича 60 çул тултарнă ятпа саламласа эпир, унăн ĕçтешĕсем, ăна малашне те çакăн пекех тимлĕ, кăмăллă, хавхалануллă пулма сунатпăр.

Ырлăх-сывлăх, çемьере ăнăçлăх сунатпăр сире, ачăрсемпе мăнукăрсем савăнăç çеç кӳччĕр, хаклă ĕçтешĕмĕр!

**Н.ГАНЕЕВА,**
**Чулпанти вăтам шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани парас енĕпе ĕçлекен çумĕ.**

**Сăнӳкерчĕкре: В.Н.Егоров 1996 çулхи кăларăмĕпе.**

## Тĕнчере чи... чи...

Чи вăйлă сасă кăларакан чĕр чун - кăвак кит. Пĕр-пĕринпе хутшăннă - "калаçнă" чухнехи сасси вĕсен 188 децибелпа танлашать. Вĕсен вăраммăн хĕсĕнсе тухакан сасси темиçе çĕр километртан илтĕнет. Çара çерçисем вара чи лайăх илтекен чĕр чунсем шутланаççĕ.

* * *

Ку таранччен курнă, шута илнĕ чи пысăк кĕтӳ вăл Кăнтăр Африкăри Хĕрлĕ-сарă юхан шыв тăрăхĕнче пулнă. Качака кĕтĕвĕн тăршшĕ 160 километра çити тăсăлнă, сарлакăшĕ - 24 километр. Унта 10 миллиона яхăн качака шутланнă.

Сан-Антонио (Техас) çĕр хăвăлĕ - сĕтлĕ чĕр чун чи йышлă пуçтарăнакан вырăн. Унта хăш-пĕр чухне 20 миллиона яхăн çара çерçи пухăнать. Шывра пурăнакан чĕр чунсем чи йышлăн пуçтарăннине 1981 çулта Антарктидăра асăрханă. Криль текен чĕр чун - пулă - кунта 10 миллион тонна яхăн пулнă. Ку вăл тĕнчере тытакан мĕн пур пулăпа рак еверлисен пĕрре çиччĕмĕш пайĕ чухлĕ.

Чи хаклă чĕр чун халĕ хытă чупакан лаша шутланать. Мактум Эль Мактум шейх хăйĕн таса ăратлă урхамахĕ 40 миллион доллортан кая мар тăни çинчен пĕлтернĕ. Китайра çеç тĕл пулакан пысăк упана - пандăна Мадрид зоопаркĕнче пĕр миллион стерлинг фунтпа туяннă. Лос-Анджелисри Марилендра пĕр мăшăр дельфина икĕ миллион долларпа сутаççĕ.

*Уяв юррисем*

## *Пĕр хура хĕр илĕп те*

- Ларттин - ларттин кăвакал,
Ларттин-ларттин кăвакал, -
Айли - айлина,
Эс манăн айлюшинка.

Ăçта каян, кăвакал,
Ăçта каян кăвакал?
Айли - айлина,
Эс манăн айлюшинка.

- Улăх хыçне каятăп.
- Улăх хыçне мĕн тума?
- Ула тына пур, теççĕ.
- Ула тына мĕн хак теç?

- Çĕр çирĕм пус, теççĕ.
- Çĕр çирĕм пус париччен.
Пĕр сурăх туянăп та
Çуллен така тутарăп.

Пĕр сурăх туяниччен
Пĕр хура хĕр илĕп те
Çуллен ывăл тутарăп,
Çуллен ывăл тутăрăп.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

## Кĕнеке авторĕ пулăр...

Çак çырăва Хĕвеланăç Двина çыранĕнчен эпĕ 1998 çулхи сентябрь уйăхĕнче Нурлат хулинче пулнă хыççăн тӳрех çырма шутларăм. Сирĕн хулăрта эпĕ пĕрремĕш хут пултăм, анчах та юлашки мар пулĕ тесе шутлатăп. Çакăнта манăн анне çуралнă, кайран белорус çыннине качча кайнă. Кăçалтан сирĕн енĕр маншăн питĕ çывăх та хаклă пулĕ.

Вагон урăписем салхуллăн: Тă-ван çĕр-шыв тесе кăлтăртатаççĕ. Шурă Руçпа Тутарстан ĕмĕр-ĕмĕрех туслă пурăннă вĕт.

Анне çĕршывĕ маншăн чикĕ леш енĕ пулса тăни питĕ кӳрентерет тата пăшăрхантарать. Çул çинче эпĕ "Пирĕн аннесем" юрра аса илтĕм те, анне вилнĕ пулин те, манăн чунчĕре юрларĕ.

Эпир Витебскра "ХХ ĕмĕрти аннесем!" кĕнеке тĕлĕшпе ĕçлетпĕр. Тутарстанра пурăнакансенчен хăйсен амăшĕсем, кукамăшĕсемпе асламăшĕсем çинчен ăшă сăмахсем çырнă çырусем илес килет. Кĕнеке соавторĕ пулас тесен писатель пулни кирлĕ мар - ахаль çыру кăна çырса ярăр, анчах та сирĕншĕн çывăх та хаклă çыннăр çинчен кирлине пурне те чун-чĕререн, ăшă сăмахсемпе çырăр.

Тутарстан çĕрĕн амăшĕсем! Эсир хăвăр та çырма пултаратăр. Нумай ачаллă хĕрарăмсенчен те çырусем кĕтетпĕр. Мăнуксем хăвăрăн кукамăрсемпе асаннĕрсем çинчен каласа парăр.

Аннесемпе кукамайсем, юратнă хĕрарăмсем çинчен çырнă сăввăрсене ярăр, анчах та вĕсем пурте чунчĕререн, ăшшăн çырнисем пулччăр.

Прозăпа çырăр, анне çинчен проза вăл - чи пысăк тĕрĕслевлĕ музыка.

Эсир аннĕрсемпе кукамăрсем, асаннĕрсем çинчен ярса панă çырусемпе тата сăнӳкерчĕксемпе редколлеги кĕнекере усă курĕ. XXI ĕмĕрти амăшĕсен те вĕсен кукамăшĕсемпе асламăшĕсем çинчен те пĕлмелле вĕт. Тĕрлĕ наци амăшĕсен пурнăçĕ, шăп кăна мĕнпур çынсемшĕн - этемлĕхе юратмалли урок пулса тăрать.

**Çырусене çак адреспа çырăр: Корнелюку Константину Степановичу**

**пр.Московский, 74-1, 2 ящик, г.Витебск - 33, 220035, Беларусь.**

* 02 Пĕлтерет * 02 Пĕлтерет *

## Наркотиксем тапăнаççĕ

Милици ĕçченĕсен куç умне час-часах наркотиксемпе усă куракан е ăна саракан граждансем, ытларахăшĕнче çула çитмен çамрăксем тĕл пулаççĕ. Çапла, чугун çул ĕçченĕсен микрорайонĕнчи уйрăм гаражра усă курма хатĕрленĕ кантăр запасне тупса палăртнă. Сăмах май каласан, вырăнти наркомансем пĕр шăрпăк коробки чухлĕ наркăмăша 50 тенкĕпе хаклаççĕ. Çак ĕç тĕлĕшпе ГРОВД сотрудниксем следстви пуçарнă.

## Çул çинчи инкек

Ноябрĕн 5-мĕшĕнче Нурлат-Аксу çулĕн 11-мĕш километрĕнче хăйпе пĕр еннелле пыракан лаша урапи çине автомашина пырса кĕнĕ. Хирĕç килекен автомашина "Жигулин" 35 çулти водителĕн куçĕсене йăмăхтарса янă. Лаша урапи çинчи çын вырăнтах вилсе кайнă.

## Вăрлаççĕ...

Нурлатра пурăнакан пĕр çыннăн "Москвич" автомобилĕнчен автомагнитолипе аккумуляторне вăрланă. Октябрь революцийĕ 81 çул тултарнин уявĕ умĕн Киклĕ ялĕнче М. предпринимателĕн магазинне çаратнă. Пӳлеркӳлĕнче ИЖ-Планета-5 мотоцикл вăрлакансене, "Тан" хуçалăх ферминчен 15 килограмлă сысна çури вăрлакана та ГРОВД сотрудникĕсем тытса чарнă.

Пĕлтерӳсем

### Сутатпăр:

*Пахчаçăсен "Алмалык" юлташлăхĕнче дача участокĕ, çурт пур, хаклă мар. Адрес: Советская урамĕ, 183-92, телефон: 65-8-50.*

* * *

*Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер. Телефон: 5-19-05, 15 сехет хыççăн шăнкăравламалла.*

* * *

*1996 çулта туса кăларнă ВАЗ-2108 автомобиль, васкавлă. Вăтам Хăмăшлăри Красновран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*1995 çулта туса кăларнă ВАЗ-21061. Телефон: 5-21-58.*

* * *

*Лайăх гараж. Телефон: 2-17-24.*

* * *

*Декабристсен урамĕнчи 70-мĕш çурт. Пăспа ăшăтмалла, çутçанталăк газĕпе çыхăнтарма хатĕрленĕ. Çĕр участокĕ, мунча, хуçалăх хуралтисем пур. 1 е 2 пӳлĕмлĕ хваттерпе улăштарма пулать. Телефонсем: 2-21-74, 5-21-86.*

* * *

*Чапаев урамĕнчи 4-мĕш çурт. Телефон: 2-21-75.*

* * *

*Туй кĕпи, хаклă мар. Телефон: 2-19-71.*

### Тĕрли:

*1997 çулта туса кăларнă ВАЗ-21213 сутатăп е апат-çимĕçпе улăштаратăп. Телефон: 2-11-13, 15 сехетрен тытăнса 19 сехетчен шăнкăравламалла.*

* * *

*ГАЗ-3307-53 сутатпăр е çăмăл автомашинăпа улăштаратпăр. Адрес: Московская урамĕ, 34, телефон: 2-12-66.*

* * *

*2 пӳлĕмлĕ хваттере 1 пӳлĕмлипе улăштаратпăр (хушса тӳлесе). Телефон: 5-27-55, 18 сехетрен тытăнса 19 сехетчен шăнкăравламалла.*

* * *

*2-мĕш номерлĕ шкул 1997 çулхи июнĕн 19-мĕшĕнче Станислав Геннадьевич Сибулатов ячĕпе панă А 1292296 номерлĕ аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла.*

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***
***Пирĕн патра кăна!***

*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!*

*Сипленĕ кун, эрнекун, ноябрĕн 27-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 12 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4399